27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
14
ВЫРСАРНИКУН
9(6760) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабĕн начальникне
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, январĕн 12-мĕшĕнче САНДОМИРТАН хĕвеланăçнерехри районран наступлени пуçласа ярса, çапăçура авиаци енчен пулăшу илме май паман япăх çанталăкра пăхмасăрах, тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ оборонине 40 километрлă фронт сарлакăшĕнче татнă. Тăшман оборонине татса кĕрес ĕçре лайăх организациленĕ, хăватлă артиллери наступленийĕ татăклă вырăн йышăнса тăнă.

Икĕ кун хушши çапăçса, наступлени туса пырса, фронт çарĕсем 40 километр таран малалла куçнă, татса кĕнĕ вырăна фронт тăрăх 60 километр сарлакăш сарнă.

Малалла тапăнса пырса, пирĕн çарсем тăшман оборонин вăйлă тĕреклетнĕ ШИДЛУВ, СТОПНИЦА, ХМЕЛЬНИК, БУСКО—ЗДРУЙ (Буск), ВИСЬЛИЦА ятлă пунктсене штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 350 пункта ытла йышăннă.

Нимĕçсен оборонине татас ĕçре çаксем чапа тухнă: ПУХОВ генерал-полковникăн, КОРОТЕЕВ генерал-полковникăн, ЖАДОВ генерал-полковникăн, МАЛАНДИН генерал-лейтенантăн, КОЛОМИНОВ генерал-майорăн, ЛЯМИН генерал-майорăн, ПУЗИКОВ генерал-майорăн, ЧЕРОКАМАНОВ генерал-лейтенантăн, МАРТИРОСЯН генерал-майорăн, ЛАТЫШЕВ генерал-майорăн, РОДИМЦЕВ генерал-лейтенантăн, ЛЕБЕДЕНКО генерал-лейтенантăн, БАКЛАНОВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КУБЕЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ФАУСТОВАН, артиллери генерал-майорĕн ПОЛУЭКТОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЬКОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОЖУХОВАН, артиллери генерал-майорĕн ХУСИДАН, артиллери генерал-майорĕн КОФАНОВАН артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал полковникĕн НОВИКОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн КУЗНЕЦОВАН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОЛУБОЯРОВАН танкисчĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ГАЛИЦКИН саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУЛЫЧЕВАН связисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, нимĕçсен оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 13-мĕшĕнче, 21 сехет те 30 минутра, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăран ÇИРĔМ хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, нимĕçсен оборонине татнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, нимĕçсен оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 13-мĕшĕ.
№ 219.

А. ПЕТРОВ

Совет Союзĕн Геройĕ, инженери çарĕсен генерал-майорĕ

Тисса шывĕ пирĕн хыçа юлчĕ

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра юлашки вăхăтра çĕнĕ çĕнтерӳсем турĕç. Вĕсем, Карпат тăвĕсен хысакĕ урлă каçса, Трансильванире кĕрсе кайрĕç. Унтан Тисса юханшывĕ патне пырса, вăл шыв урлă ăнăçлăн каçрĕç те, Венгри территорийĕ тăрăх шалалла кĕрсе кайрĕç. Халĕ ĕнтĕ Тисса юханшывĕ пирĕн хыçа инçете тăрса юлчĕ.

Нимĕçсен командованийĕ Тисса юханшывĕ çине пысăк шанăç хунă пулнă. Мĕншĕн тесен вăл тактика тĕлĕшĕнчен пысăк чăрмав пулса тăрать. Унăн сарлакăшĕ 200—250 метра çитет, тарăнăшĕ 9—12 метр шутланать. Шыв хĕрринче тăвайкиллĕ, чылай çĕрте шурлăхлă вырăнсем. Техникăпа автотранспорт валли шыв хĕрне пымалли вырăнсем те сахал. Тисса шывĕ сăрт-тусем хушшинче пуçланать. Çавна пула вара вăл пĕрмаях улшăнса тăрать. Хăшпĕр чухне, уйрăмах кĕрхи сăмăрсем вăхăтĕнче, шыв нумай тулать. Пирĕн çарсем Тисса урлă каçнă чухне те Тисса шывĕ 4 метр таран хутшăннă. Çакă пирĕн çарсем умне нумай йывăрлăхсем кăларса тăратрĕ.

Унсăр пуçне тата тăшман шыв хĕррипчи вырăнсене инженери тĕлĕшĕнчен сахал мар çирĕплетнĕ. Вырăнти халăха ĕçлеттерсе, траншейăсем, окопсем нумай алтса хунă, çарсене пытарса тăратмалли вырăнсем хатĕрленĕ. Хăшпĕр çĕрте танксенчен сыхланмалли канавсем алтнă.

Пирĕн çарсем Тисса патне çывхарнă чухне ун урлă каçма пĕр кĕпер те пулман. Малтан пулнă кĕперсене пĕтĕмпех тăшман аркатса хăварнă.

Анчах пирĕн паттăр çарсене нимĕçсем Тисса хĕрринче тунă çирĕплетнĕ вырăнсем те чарса тăма пултараймарĕç. Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем, Днепрпа Днестр, Буг, Прут, Серет тата ытти нумай шывсем урлă каçса пысăк опыт пухнăскерсем, тăшман Тисса шывĕ патĕнче чарăнса тăма шутланине те сирсе ячĕç. Пирĕн çарсем Тисса юханшывĕ урлă каçрĕç кăна мар, тата тăшмана çурçĕр-хĕвеланăçнелле нумай хăваласа ячĕç, халĕ те хăваласа пыраççĕ.

Тисса юханшывĕ урлă каçнă чухне пирĕн çарсем хăйсен пултарулăхĕпе паттăрлăхне лайăх кăтартса пачĕç. Пирĕн командовани Тисса урлă каçассине пĕтĕм фронт тăршшĕпех пĕр вăхăтра организацилеме йышăнчĕ. Ку питех те тĕрĕс. Çакăн пек чухне тăшман хăйне хăш тĕлте пырса çапассине тĕрĕс чухласа илме пултараймасть. Шыв урлă каçас ĕç ноябрĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чухне каçхине пуçланчĕ. Чи малтанах, хăйсене кирлĕ техникăна илсе, çуран çарсем каçма тытăнчĕç. Анчах тăшман çийĕнчех сисрĕ. Вăл малтанхи подразделенисем шыв хĕрне çитсенех, мĕнпур хĕçпăшалсенчен вăйлăн персе тăма тытăнчĕ.

Тăшман вăйлăн персе тăма тытăнсанах пирĕн артиллери хăватлăн пеме пуçларĕ. Пулеметсемпе минометсенчен, тупăсенчен хăватлăн персе тăрса, тăшманăн чылай çирĕплетнĕ пункчĕсене çĕмĕрсе тăкрăмăр. Çакă вăл пирĕн çуран çарсене питех те пысăк пулăшу пачĕ. Пирĕн паттăр воинсем, тăшмана çĕмĕрсе тăкас туйăмпа Тисса шывĕ урлă каçса, унтан тăшмана штыкпа, гранатăпа хăваласа ячĕç. Хăватлăн пырса çапнине тӳсеймесĕр, тăшман каялла чакма тытăнчĕ. Çав каçхине вара пирĕн çарсем Тисса шывĕн тепĕр енче 6 плацдарм çĕнтерсе илчĕç.

Тисса шывĕ урлă каçнă чухне саперсем хăйсен пултарулăхне лайăх кăтартса пачĕç. Вĕсем, тăшман вăйлăн персе тăнине пăхмасăр, подразделенисемпе вăрçă техникине шывăн тепĕр енне куçарса тăчĕç. Вĕсем çакна лайăх пĕлнĕ: çарсемпе вăрçă техникине шыв урлă ытларах каçарсан, плацдарма сыхласа хăварма та çăмăлтарах пулать.

Тул çутăлсан, тăшман персе тăнине пула, шыв урлă каçассине вăхăтлăха чарма тиврĕ. Ирхине вара пирĕн артиллери тепĕр хут ĕçе тытăнчĕ. Вăл хăватлăн персе тăрса, шывăн тепĕр енне каçнă çарсене пулăшса тăчĕ.

Тăшман шывăн тепĕр енне каçнă çарсем çине кунĕ-кунĕпех вăйлăн персе тăчĕ, темиçе хутчен контратакăна тухса пăхрĕ. Контратакăсенче танксем те пулчĕç. Пирĕн çарсем мĕнпур контратакăсене сирсе пăрахрĕç, тăшмана пысăк сиен кӳчĕç.

Тепĕр каçхине пирĕн çарсем хăйсен плацдармĕсене малалла аслăлатрĕç. Вăл каçхине Тисса шывĕн хĕвеланăç енне артиллери тата боеприпассем нумай каçартăмăр. Çавăнпа усă курса, тăшмана икĕ километр таран хăваласа ятăмăр. Тепĕр кунхине те пирĕн çарсем хăйсен плацдармне чылай аслăлатрĕç.

Пирĕн çарсем валли шыв урлă боеприпассемпе хĕçпăшалсем турттарас ĕçре пушă пичкисемпе усă курса тунă 240 метр вăрăмĕш кĕпер паллă вырăн йышăнчĕ. Вăл кĕпере тума пичкесене малтанах шыв хĕрне илсе пырса пытарса хунă. Кĕпере тума ноябрĕн 9-мĕшĕнче тытăнса, 36 сехет хушшинче туса пĕтернĕ.

Тăшмана Тисса юханшывĕ хĕрринчен хăваласа янă хыççăн шыв урлă кĕперсем тума тытăнтăмăр. Командовани кăтартса панă вырăнсенче икĕ кĕпер турăмăр. Вăл кĕперсемпе халĕ те усă куратпăр-ха.

Тисса шывĕ урлă каçни Хĕрлĕ Çарăн пултарулăхĕпе паттăрлăхне тата тепĕр хут кăтартса парать. Пирĕн паттăр воинсемшĕн нимĕнле шыв та чăрмав пулса тăма пултараймасть. Суворов сăмахĕсемпе каласан: эпир—вырăссем, эпир пурне те çĕнтеретпĕр.

Халĕ пирĕн çарсем нимĕç захватчикĕсене Венгри территорийĕ çинче çĕмĕрсе пыраççĕ. Çĕнтерӳ сехечĕ çывхарса килет. Нимĕç тискер кайăкне вилĕмрен сăрт-тусем те, шывсем те çăлса хăварма пултараймĕç.

Ӳкерчĕк çинче: Пирĕн земляк Совет Союзĕн Геройĕ генерал-майор Антон Петрович ПЕТРОВ. Ăна Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ хăйĕн приказĕсенче пилĕк хут асăнса тав тунă. Антон Петровича кăкăрне „Ылттăн Çăлтăр" медаль, улттă орден тата икĕ медаль илемлетсе тăраççĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес тата çитĕннĕ выльăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе панă заданисене ирттерсе пурнăçланăшăн колхозниксене хушса тӳлесси çинчен

Чăваш АССР-ĕнчи выльăх-чĕрлĕх фермисенче колхозниксене хавхалантарас шутпа тата колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне малалла ӳстерес тесе, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Чăваш АССР-ĕнчи колхозсене, 1945 çултан пуçласа, çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес тата çитĕннĕ выльăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе панă заданисене ирттерсе пурнăçланăшăн выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тӳленисĕр пуçне тата выльăхпа çакăн чухлĕ хушса тӳлеме сĕнес:

А. МАЙРАКАЛЛА ШУЛТĂРА ВЫЛЬĂХ ФЕРМИСЕНЧЕ

а) Халиччен пăрулана е пăруламан ĕнесене 10 ĕнерен кая мар пăхса тата суса пурăнакан колхозницăна—хăйне çирĕплетсе панă мĕнпур ĕнесенчен пăрусем илсе вĕсене пăру пăхакана панăшăн—4 уйăхри пĕр путек е 2 уйăхри пĕр сысна çури памалла;

б) пăру пăхакана—пăхса ӳстерме панă мĕнпур пăрусене 20 куна çитиччен пăхса ӳстернĕшĕн—кашни 20 пăру пуçне 4 уйăхри пĕр путек е 2 уйăхри пĕр сысна çури памалла;

в) халиччен пăрулана е пăруламан ĕнесене 10 ĕнерен кая мар пăхса тата суса пурăнакан колхозницăна—хăйне çирĕплетсе панă мĕнпур ĕнесенчен пăрусем илсе вĕсене пăру пăхакана париччен 20 кун хушши пăхса усранăшăн—4 уйăхри пĕр пăру памалла, пĕр ĕне хĕсĕр юлнă пулсан — 4 уйăхри пĕр путек е 2 уйăхри пĕр сысна çури памалла;

г) пăру пăхакана—хăйне пăхса ӳстерме панă мĕнпур пăрусене 6 уйăха çитиччен пăхса ӳстернĕшĕн—пăхса ӳстернĕ кашни 25 пăру пуçне 4 уйăхри пĕр пăру памалла, пăхса ӳстерме панă пăрусен 95 процентĕнчен кая мар пăхса ӳстернĕ пулсан — 4 уйăхри пĕр путек е 2 уйăхри пĕр сысна çури памалла.

25 пăруран каярах пăхса пурăннă пулсассăн, çав пăрусене пурне те 6 уйăха çитиччен пăхса ӳстернĕшĕн—кашни пăхса ӳстернĕ пăру пуçне 3-шер килограмм какай парас шутпа сысна çурисем е путексем памалла;

д) 10 ĕнерен кая мар пăхса тата суса пурăнакан колхозницăна, пăрусене 6 уйăха çитиччен пăхса ӳстернĕскере, хăйне çирĕплетсе панă мĕнпур ĕнесенчен пăрусем илнĕшĕн тата вĕсене сыхласа хăварнăшăн—6 уйăхри пĕр пăру памалла, пĕр ĕне хĕсĕр юлнă пулсан—2 уйăхри пĕр сысна çури е 4 уйăхри пĕр путек памалла.

10 ĕнерен каярах пăхса пурăнсассăн, хăйне çирĕплетсе панă мĕнпур ĕнесенчен пăрусем илсе вĕсене 6 уйăха çитиччен пăхса ӳстернĕшĕн—пăхса ӳстернĕ кашни пăру пуçне 4-шар килограмм какай парас шутпа сысна çурисемпе путексем памалла;

е) пăрусене 6 уйăхран пуçласа пĕр çула çитиччен пăхса ӳстерекен колхознике — хăйне çирĕплетсе панă мĕнпур пăрусене сыхласа хăварнăшăн, вăл 40 пăруран кая мар пăхать пулсан—пĕр çула çитнĕ мăйракаллă шултăра выльăх пĕр пуç памалла.

Çавăнтан сахалтарах пăру пăхса пурăнать пулсан, çав пăрусене пурне те сыхласа хăварнăшăн—кашни сыхласа хăварнă пăру пуçне 2-шер килограмм какай парас шутпа путексем е сысна çурисем памалла;

ж) пĕр çултан иртнĕ выльăхсене пăхакан колхозника—хăйне çирĕплетсе панă мĕнпур выльăхсене пăхса ӳстернĕшĕн, вăл 40 пуç выльăхран кая мар пăхса пурăнать пулсан—6 уйăхри пĕр пăру памалла.

Çавăнтан сахалтарах выльăх пăхса пурăнать пулсан, вĕсене пурне те сыхласа хăварнăшăн—кашни сыхласа хăварнă выльăх пуçне 1,5-шер килограмм какай парас шутпа сысна çурисем е путексем памалла;

з) мăйракаллă шултăра выльăх фермин заведующине—кашни 100 ĕне пуçне 85 пăруран кая мар пăхса ӳстернĕшĕн, выльăх йышне ӳстермелли плана тултарнă пулсан,—пăхса ӳстернĕ кашни 40 пăру пуçне пĕр çулхи мăйракаллă шултăра выльăх пĕр пуç памалла; кунсăр пуçне, фермăри шултăра выльăхсен 97 процентĕнчен кая мар пĕр çулталăк хушши пăхса усранăшăн—6 уйăхри пĕр пăру памалла.

Б. СУРĂХ ФЕРМИСЕНЧЕ

а) Сурăх фермисенче ĕçлекен колхозниксене—кашни 100 сурăх пуçне 110 путекрен кая мар илсе вĕсене ĕмĕртме пăрахтариччен сыхласа хăварнăшăн—çав хисепрен ытларах сыхласа хăварнă путексен çуррине памалла.

Кунсăр пуçне, сурăхсен тата ĕмĕртме пăрахтарнă путексен 95 процентĕнчен кая мар çулталăк хушши пăхса усранăшăн—çав хисепрен ытлашши сурăхсен çуррине памалла;

б) сурăх фермин заведующине—кашни 100 сурăх пуçне 100 путекрен кая мар пăхса ӳстернĕшĕн, сурăхсен тата ĕмĕртме пăрахтарнă путексен 95 процентĕнчен кая мар çулталăк хушши пăхса усранăшăн — сурăх фермисенчи работниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе панă путексемпе сурăхсен чĕрĕк пайне памалла.

В. СЫСНА ФЕРМИСЕНЧЕ

а) Сысна фермисенче ĕçлекен колхозниксене—хăйсене çирĕплетсе панă кашни сысна ами пуçне 7-шер сысна çуринчен ытларах икĕ уйăха çитиччен пăхса ӳстернĕшĕн—çав хисепрен ытлашши пăхса ӳстернĕ 2 уйăхри сысна çурисен пиллĕкмĕш пайне памалла;

б) сысна фермисенче ĕçлекен колхозниксене, çитĕннĕ сыснасене тата 2 уйăхран иртнĕ сысна çурисене пăхаканскерсене — хăйсене çирĕплетсе панă сыснасен тата икĕ уйăхран иртнĕ сысна çурисен 95 процентĕнчен кая мар сыхласа хăварнăшăн—2 уйăхри пĕр сысна çури памалла;

в) сысна фермин заведующине—фермăри сыснасен 95 процентĕнчен кая мар сыхласа хăварнăшăн тата кашни сысна ами пуçне 7-шер сысна çуринчен кая мар пăхса ӳстернĕшĕн—сысна фермипчи работниксене ĕçшĕн хушса тӳлес шутпа панă сысна çурисен тăваттăмĕш пайне памалла;

г) пĕрремĕш çур çул хушшинче кашни çăварланă сысна пуçне 7-шер сысна çуринчен ытларах пăхса ӳстернĕшĕн—сысна пăхакансене ĕçшĕн хушса тӳлес йĕркепе пĕрремĕш çур çулта çуралнă сысна çурисене ĕмĕртме пăрахтарнă хыççăн памалла, вĕсене колхоз государствăна пĕрремĕш çур çулшăн какай парса татнă пулсан памалла;

иккĕмĕш çур çул хушшинче çуралнă сысна çурисене пăхса ӳстернĕшĕн—ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе вĕсене çулталăк пĕтсен памалла.

Г. ЛАША ПАХНАШАН

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Колхозсемпе совхозсенче лашасен йышне ӳстермелли тата вĕсене пăхассине лайăхлатмалли мерăсем çинчен» 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче йышăннă 510-мĕш номерлĕ постановленире кăтартнисĕр пуçне тата çакăн чухлĕ памалла:

а) конюх—хăйне çирĕплетсе панă кашни 10 кĕсре пуçне 6 тихаран кая мар 6 уйăха çитиччен пăхса ӳстернĕшĕн—пĕр пăру е 4 уйăхри 2 путек памалла;

б) 6 уйăхран иртнĕ тихасене çирĕплетсе панă конюха—мĕнпур тихасене çулталăк çурра çитиччен сыхласа усранăшăн—пăхса ӳстернĕ кашни 5 тиха пуçне 4 уйăхри пĕр путек е 2 уйăхри пĕр сысна çури памалла;

в) уйхир бригадинчи тата выльăх-чĕрлĕх бригадинчи колхознике—хăйне ĕçлеме панă кашни кĕсререн тиха илсе ăна 6 уйăха çитиччен пăхса ӳстернĕшĕн—кашни тиха пуçне 5-шер килограмм какай памалла;

г) уйхир бригадин бригадирне—бригадăна çирĕплетсе панă кашни 10 кĕсререн 6 тиха илсе, вĕсене сыхласа хăварнăшăн — çулталăк пĕтнĕ чухне кашни 6 тиха пуçне 2 уйăхри пĕр сысна çури е 4 уйăхри пĕр путек памалла.

2. Çамрăк выльăхсене пăхса ӳстермелли тата çитĕннĕ выльăхсене сыхласа хăвармалли заданисене ирттерсе пурнăçланăшăн хушса тӳлемеллине колхозниксене çак сроксенче памалла: кашни кварталтах колхоз государствăна какай парса татнă хыççăн пĕр кварталшăн хушса тӳлемеллин 50 процентне памалла, хушса тӳлемелли ытти пайне вара çулталăк пĕтсен памалла.

3. Çак постановлени кăларнипе СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «Чăваш АССР-ĕнче ялхуçалăх культурисен тата выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене хушса тӳлемелли çинчен» 1941 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă 565-мĕш номерлĕ постановленийĕн 4-мĕш пункчĕ çамрăк выльăхсене, мăйракаллă шултăра выльăхсене, сыснасене, сурăхсене тата лашасене сыхласа хăварнăшăн хушса тӳлес тĕлĕшпе хăйĕн вăйне çухатнă тесе шутламалла.

УЗБЕКИСТАНРА ИСКУССТВО МĔНЛЕ АТАЛАНСА ПЫНИНЕ ПАХСА ТУХМА ПУХНА НАУЧНАЙ КОНФЕРЕНЦИ

Ташкентра Узбек ССР-не тунăранпа 20 çул хушшинче Узбекистанри искусство мĕнле аталанса пынине пăхса тухма научнăй конференци туса ирттернĕ.

Узбек республикинче ăна туса хунă вăхăтра мĕн пурĕ те 5 театр кăна пулнă. Халĕ театрсен шучĕ 42 çитет, вĕсем хушшинче—2 опера театрĕ тата 16 драма театрĕ. Узбек искусствин мастерĕсем хушшинче Сталинла премин 3 лауреачĕ, 38 халăх артисчĕ тата искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕсем 27 çын пур. Çĕр çынна яхăн СССР орденĕсемпе медалĕсем парса наградăланă.

Узбекистанри музыка ĕçĕнче Узбек республикин халăх артисчĕ М. Ашрафи пĕрремĕшпе иккĕмĕш симфоние çырни питĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. Узбексен ку таранччен пулман нацилле балетне тунă. Елĕк Узбекистанра музыка шкулĕсем пĕртте пулман пулсан, халĕ республикăра 11 музыка шкулĕ ĕçлет. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 12-мĕшĕнче БУДАПЕШТ хулинче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен группировкине хупăрласа илнĕ унка хĕстерсех пынă, хулан ВАРОШЛИГЕТ паркне, КЕРЕПЕШИ масарне, нефть тасатакан завода, пăшал заводне, удобрени заводне туртса илнĕ, çапла пĕтĕмпе 135 квартал йышăннă. Январĕн 11-мĕшĕнче БУДАПЕШТ хулинче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 1.270 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Чугун çул çинче тавар станцинче 5.100 вагон тата 31 паровоз тытса илнĕ.

БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă. Январĕн 11-мĕшĕнче ку районра нимĕçсен 67 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă тата 6 самолетне персе ӳкернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

☆ ☆ ☆

Будапештра пирĕн çарсем тăшманăн çапăçса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Йышлă чăрмавсене çĕнтерсе, совет подразделенийĕсем чул çуртсене кĕрсе ларнă гитлеровецсене пĕтерсе пыраççĕ. Ĕнер хулари Варошлигет ятлă тĕп парка вăркăнса кĕрсе кайнă гварди подразделенийĕсем ăнăçлăн малалла куçса пынă. Паян ирхине гвардеецсем Надь кӳллинчен иртсе кайнă. Варошлигет паркне тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă, халĕ тăшманпа Дунай шывĕнчен километр çурă çапăçаççĕ. Тепĕр гварди чăçĕ стадиона тата Керепеши масарне йышăннă. Хулан кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче пирĕн çарсем темиçе вунă квартал тата 8 фабрикăпа завод йышăннă. Панченкăпа Шемякин офицерсен артиллерисчĕсем хӳтлĕхсенче ларнă гитлеровецсене хăваласа кăларнă чухне тăшманăн 10 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Белякозпа Афанасьев красноармеецсем нимĕçсем çирĕпленсе ларнă çурта пуринчен малтан вăркăнса кĕрсе кайнă. Хăюллă боецсем, автоматпа персе, вунă гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 14 нимĕçе тыткăна илнĕ. Çуртран тухсан, Беляковпа Афанасьев икĕ урам кĕтессинче нимĕçсен пĕтĕмĕшпех юсавлă туппине тытса илнĕ те унпа тăшман персе тăракан вырăнсене пеме пуçланă.

* * *

Будапештран хĕвеланăçнерехре ирхине тăшман, артиллерирен вăйлă персе хатĕрленĕ хыççăн, пирĕн позицисене атакăланă. 3—4 километр сарлакăш участокра, пынă çапăçăва нимĕçсем 100 танка çити тата моторизованнăй пехотăн пысăк вăйĕсене кĕртсе янă. Тăшман, çавăн пек çирĕп вăйпа пырса çапса, совет оборонине татма шутланă. Пирĕн артиллеристсем, бронебойщиксем тата пехотинецсем гитлеровецсене питĕ хытă пеме пуçланă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Çав çапăçу пилĕк сехет ытла пынă. Пĕр соединени чăçĕсем тăшман атакисене сирсе янă чухне, туллимар даннăйсем тăрăх, 1.000 нимĕçе çити пĕтерсе тăкнă. 35 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен туппа пĕтерсе янă е персе çĕмĕрнĕ.

Пирĕн авиаци тăшманăн çапăçури речĕсем çине бомбăсем пăрахса штурмланă. Темиçе танк, 4 бронетранспортер, 90 автомашина, 28 хир туппи пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Совет воинĕсем çапăçусенче хăюллă та паттăррăн кĕрешеççĕ. Артиллери батарейинчи шофер Василий Фисенко тăшман контратакине сирсе янă чухне пулеметпа флангра тухнă та тĕл персе нимĕçсене пысăк çухату кӳнĕ. Берховпа Зайцев рядовойсем тăшман отрядне пеме тытăннă, вара отряд алăри хĕçпăшала пăрахнă. 37 нимĕç тыткăна паранна. Скачковпа Юрков снайперсем юлашки çапăçусенче кашни 12-шер нимĕçе вĕлернĕ. Гварди рядовойĕ Севрюков окопра пытанса ларнă та нимĕçсен танкне çывăхах янă, вара, автоматпа персе, танк брони çинче ларса пыракан 4 нимĕç автоматчикне пĕтерсе тăкнă. Летчик-истребительсем Трусов лейтенантпа Мордовский кĕçĕн лейтенант нимĕçсен «Фокке-Вульф—190» йышши самолечĕсен ушкăнне атакăланă. Трусов лейтенант тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ. Мордовский кĕçĕн лейтенант тăшманăн пĕр самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Будапешт хулин тăшман тытса тăракан районĕсенчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă венгер салтакĕсемпе граждансем каласа кăтартнă тăрăх, нимĕçсем Будапешт хулине çине тăрсах ишĕлтереççĕ, пурăнмалли çуртсене тата обществăллă çуртсене те сывлăшша сиктере-сиктере яраççĕ. Халăх подвалсенче тата нӳхрепсенче пытанса пурăнать. Чылай çуртсене гитлеровецсем унта пурăнакан çынсене пĕлтермесĕрех сиктерсе янă. Йăтăнса аннă çуртсем айĕнче темиçе пин çын пĕтнĕ. Нимĕç салтакĕсем хватерсене çаратса тухаççĕ, хаклă япаласене, апат-çимĕçе хăйсем валли илеççĕ. Гитлеровецсем хулара тискеррĕн хăтланаççĕ, мĕн тăвас тенĕ çавна тăваççĕ, пĕр айăпсăр çынсене пере-пере пăрахаççĕ. Хулари халăх выçă пурăнать. Выçă пирки нумай çын вилнĕ. Венгерсем нимĕçсене тата вĕсен Салаши шайккинчи хӳрешкисене курайманнине пытарса тăмаççĕ. Нимĕçсен командованийĕ вĕсене совет командованийĕ парăнма хушса панă ультиматума йышăнман хыççăн хулара вырăнĕ-вырăнĕпе нимĕçсене хирĕç тăнисем пулнă. Венгерсен пĕр ушкăнĕ нимĕçсем йышăнса тăракан «Метрополь» ятлă гостиницăри ресторана бомба пăрахнă. Çав бомба çурăлса кайса 20 нимĕç офицерне вĕлернĕ. Венгри патриочĕсем подвалсенче тата чардаксенче пытанаççĕ те урамсем тăрăх пыракан нимĕçсене переççĕ. Декабрь уйăхĕнче нимĕçсем Будапешт хулинчи заводсен Чепель ятлă районĕнчи халăха темиçе хутчен те урăх çĕре куçарса кайма хăтланнă. Халăх тăван вырăна пăрахса урăх çĕре кайма пачах килĕшмен. Нимĕçсемпе салашистсем çынсене хăйсен çурчĕсенчен вăйпа хăваласа кăларма тытăннă, анчах та халăх алла хĕçпăшал тытса вĕсене хирĕç тăнă. Рабочисен нумайĕшĕн пытарса хунă автоматсем, пистолетсем, винтовкăсем пулнă. Çав хĕçпăшалпа вĕсем нимĕçсемпе салашистсене чылай пысăк çухатусем кӳнĕ.

А. С. Грибоедов

(Çуралнăранпа 150 çул тултарнă тĕле)

«Грибоедов — вырăс шухăшĕн чи хăватлă палăрăмĕ», тенĕ Белинский. Чăнахах та, хăйĕн ăс-тăнĕпе, йăлкăшса тăракан таланчĕпе, нумай пĕлнипе тата творчество калăпăшĕпе Грибоедов вырăс литературинче чи паллă вырăнсенчен пĕрине йышăнса тăрать. Вăл, вырăссен сăвăллă комедине никам пек те мар çÿлĕ пусăма хăпартса, çивĕч сатирăна психологиллĕ драматизмпа тата лирикăллă тарăн туйăмпа сыхăнтарма пĕлнĕ. Халĕ те унăн геройĕ вырăс литературинчи вăйлă та ырă образсен шутĕнче, тарăн ăслă, вут пек хăватлă сăмахĕне уйрăмăнах паралса тăрать. Геройăн сăн-сăпачĕ тÿрех автор сăн-сăпатне аса илтерет.

Александр Сергеевич Грибоедов 1795 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче, авалхи дворян çемьинче çуралнă. Амăшĕ тăрăшнипе пула ăна лайăх воспитани панă. Вунпĕр çултах вăл Мускав университетне вĕренме кĕнĕ те, виçĕ факультетра пĕр вăхăтрах вĕренсе пынă. Вăл сăмах наукисен тата право наукин кандидачĕ пулнă, математикăпа естествознани наукисен докторĕ пулма хатĕрленнĕ, вырăс историне лайăх вĕреннĕ, географипе, археологипе, хĕвелтухăç филологийĕпе, славяноведенипе сав тери интересленнĕ. Вăл паллă лингвист пулса санскрит чĕлхине вĕреннĕ, французла, нимĕçле, акăлчанла, итальянецла пит лайăх калаçнă, хĕвелтухăç чĕлхисене—араб, турок тата перси чĕлхисене пĕлнĕ.

Çамрăкран хăй ĕмĕтленнĕ пек, ăна литература е наука ыйтăвĕсем çинче пусăрăнса ларма май пулман. Ютçĕршыв коллегине ĕçлеме кĕнĕ хыççăн часах вăл, государство ĕçĕнче пулнăскер, политикăллă паллă деятель пулса тăрать. Хĕвелтухăçĕнчи унăн дипломатиллĕ кĕрешĕвĕ, экономикăллă планĕсем, сăмахран, Кавказ леш енчи Россия Компанийĕн проекчĕ, хăйсен анлăшĕпе тĕлĕнтереççĕ. Грибоедов дипломатиллĕ ĕçре пĕр пĕччен темĕн чухлĕ сынна тăрать,—тесе, шутланă ун çинчен Петербургра. Çулăмлă патриот пулса, вăл хăй çĕршывĕн чапĕпе унăн чысне чи малти вырăна хунă. Çавăнпа та 1828 çултах ăна, вăтăр виçĕ çула çитсенех, Персие полномочный посланник туса янă.

Государствăн паллă деятелĕ пулнипе пĕрлех, Грибоедов политикăллă малта пыракан шухăшсене те йышăннă. Вăл декабристсене сывăх тăнă. Рылеевпа, Бестужевпа, Кюхельбекерпа тата Одоевскипе туслă пулнă, вĕсен хушшинче вăл «ирĕклĕ шухăшлакан» сын шутланнă. Российăра чуралăха пĕтерсе хурас, главнăй суд органнизацилес тата кĕнекесем ирĕклĕн пичетлемелле тăвас текен вĕсен шухăшĕсемпе Грибоедов килĕшнĕ. 1826 çулта ăна, декабристсен ĕçĕ пирки, следстви умне те тăратнă пулнă.

Анчах артистла натура унăн пуринчен те ытларах паларса тăнă пулас. Вăл музыкăна çав тери юратнă, пианино çинче пит аста выляна, хăй вăхăтĕнчи чи паллă композиторсемпе — Глинкăпа, Верстовскипе, Алябьевпа туслă пулнă. Вăл музыка теорипе интересленнĕ, хăй те композицилесе пăхнă. Моцарт тата Бетховен, Гайдн тата Вебер—унăн чи юратнă композиторĕсем пулнă. Театра та вăл савăн пекех хапăл тунă. Александр Сергеевич чаплă вулавçă пулнă, актер ĕçне те юратнă. Килти сценăсем çинче пĕрре кăна мар Мольерăн «Мизантропĕнче» вăл Альцест рольне выляна. Вăл Шекспирпа Расинтан тĕлĕннĕ, хăй те часах водевильсемпе комедисем сырма пуçланă. Вĕсем, паллах, унăн «Горе от ума» ятлă гениллĕ произведенийĕ патне илсе пыракан пусăмсем кăна пулнă-ха. Вырăс комедийĕн шедеврне чăн-чăн поэт çырса хăварнă. «Поэзи! Юрататăп ăна чĕререн»,—сырнă Грибоедов хăйĕн пĕр çырăвĕнче. Вăл тĕнчери поэзин чи паллă произведенийĕсене лайăх пĕлсе тăнă, хамăр çĕршыври авторсенчен пуринчен ытла Жуковскине, Батюшкова, Пушкина юратнă. Грибоедов чылай сăвăсем хăварнă, вăл сăвăсем «Горе от ума» ятлă пулас комедин чĕлхине туптаса çитернĕ. Грибоедовăн пысăк таланчĕ унăн пĕтĕм пурнăçĕнче те паларнă. Унăн хăйне уйрăм тарăн ăсĕ, унăн чаплă таланчĕсем ун чухнехи вырăс пурнăçĕн условийĕсенче ирĕклĕн ÿссе çитĕнме пултарайман. «Хаяр ĕмĕр» кăшăлĕнче унăн ăслă пуçĕ мĕн курмаллине ытлашшипех курнă. Чаплă художник пулнипе хăй вăхăтĕнчи сынсем йышăнман пирки унăн нумай хурлăх тÿсмелле пулнă. Самодержави государствипе крепостничество обществи условийĕсенче унăн творчество хăвачĕ, унăн гениллĕ трагедипе вĕçленмелле пулнă. «Ĕмĕр юр ирĕлмен çĕршывра çулăмлă ĕмĕтленекен пулма питĕ асаплă», тесе сырнă Грибоедов.

Авторăн шухăш-кăмăлĕ çапла хумханнипе çуралса тухнă та ĕнтĕ унăн чаплă комедийĕ.

Студент пулнă чухнех Грибоедов хăй шухăшласа хунă пысăк пьесăн сыпăкĕсене юлташĕсене вуласа панă. 1820 çулта ши, Тавризра пулнă чухне, вăл хăйĕн шухăшне пур енчен те вĕçлесе çĕрме пултарнă. Ют çĕрте авалхине, таван Мускава, унăн обществине, хăй обществăра тăр пĕччен тăрса юлнине аса илсе, гениллĕ комеди авторĕ çав аса-илÿсенче произведени çырмалăх материал тупать. Вăл произведени—вырăс литературин мăнаçлăхĕ пулса тăрать.

1821—1823 çулсенче, Тифлисра Ермолов патĕнче дипломатиллĕ секретарь пулса ĕçленĕ вăхăтра, Грибоедов «Горе от ума» комедин пирвайхи акчĕсене çырать. 1923 çулта отпуск илсе, вăл Мускава каять. Унта Александр Сергеевич каллех чаплă общество хушшине кĕрет, унăн пурнăçне сăнать, вара çулла, хăйĕн тусĕн — Бегичевăн именийĕнче комедин юлашки акчĕсене çырать. Тепĕр çултаăкран Петербургра кăна вăл çав комедие çырса пĕтернĕ. Тăвата çула яхăн паллă художник хăйĕн аслă творенийĕпе ĕçленĕ. Çапла вара вăл драма таракăлхĕпе, социаллă анлăхĕпе, поэтикăн чаплă стилĕпе тĕлĕнтерекен пьеса çырса хунă.

Пирĕн умра—XIX-мĕш ĕмĕрти Мускав. «Грибоедов Мускавĕ». Пирĕн умра—пĕтне пĕри çиекен, икĕпитленекен, харпăрхăйшĕн çеç тăрăшакан, вĕренÿлĕхе курайман дворянсен ушкăнĕ. Хăйĕн хĕç пек çивĕч диалогĕсенче Грибоедов «Иртнĕ пурнăçăн ирсĕр енĕсене» ĕмĕрлĕхе палăртса хăварнă.

Чаплăран та чаплă комедири нумай типсене Грибоедов тÿрремĕнех пурнăçран илсе сырнă. Грибоедов каланă тăрăх, вăл хăйĕн комедине «портретсем» кÿртсе чĕрĕ сынсенчен художествăллă типсем туса кăтартнă. Чăнахах та, хăй вăхăтĕнчи сынсем Чацкий—пьеса авторĕ пек пулнине е Пушкинăн паллă тусĕ—Чаадаев пек пулнине тавçăрса илнĕ. Фамусов—автор куккăшне, паллă Мускав сыннине—Алексей Федорович Грибоедова аса илтернĕ. Скалозуб—Паскевиче, Аракчеева аса илтернĕ. Княгиня Марья Алексеевна—Мускав генерал-губернаторĕн амăшне, пуринчен те паллă Голицынăна аса илтернĕ. Кусем пурте Грибоедов вăхăтĕнче пурăннă, вĕсене сцена образĕсене ĕмĕрлĕхе кĕртсе хăварнă. «Мускав пурнăçĕн тĕрлĕ енĕсене палăртакан вăл сăн-питсене çав тери тĕп-тĕрĕс кăтартма пултарнине пула,—тесе çырнă 1830 çулта Мускав профессорĕ Надеждин,—вĕсем çине пăхасах килет. Камран ÿкерсе илнисене палласа илетĕн те, касса кайсах кулатăн». Пĕтĕм обществăн ÿкерчĕкне савăн пек сăнласа пама пĕлнинче художник-реалистăн генийĕ пĕтĕмĕшпех паларнă.

Грибоедов сăнласа панă социаллă анлă картина сатирăллă картина çеç мар, хăй вăхăтĕнчи сынсем калашле, чăн-чăн политикăллă комеди пулнă. Пьесăра декабристсен вăхăтĕнчи идейăллă пурнăç уççăнах куранă. Вăл, вырăс репертуарĕнчи социаллă пĕрремĕш пьеса пулса, Александр патша вăхăтĕнчи вăрттăн ĕçлекен обществăсен шухăшĕсемпе таччăн сыхăнса тăнă.

Комедин тĕп геройĕ—Чацкий ун чухнехи вырăс çамрăкĕсен çавăн йышши вăрттăн ушкăнĕсем патнелле туртăннă. Герцен тата Достоевский, Аполлон Григорьев критик, Ключевский историк т. ыт. те çавăн пек хакланă та ăна. Салхуллă, тарăхнипе чĕтрекен, иронипе витĕннĕ, тĕрлĕ ĕмĕтсемпе çунакан Чацкий—пĕрремĕш Александр патшара ларнă вăхăтăн юлашки кунĕсенче, Исакиевски площадьре пăлханас умĕн кăшт кăна маларах паларать. «Вăл—декабрист», тесе çырнă Герцен ун çинчен.

Крепостникла йĕркесене, патша тавраçĕнчи йăласене, бюрократизма питлекен Чацкийĕн паллă монологĕсем. Грибоедов хÿтĕлекен наци тивĕçлĕхĕ, вырăс культурипе вырăс чĕлхи—çаксем вĕсем пурте декабристсен программине кĕнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Добролюбов çамрăк чухне унăн Чацкий пек пулас килни çинчен каланă.

Грибоедов геройĕ—малта пыракан ăрăвăн чăн-чăн представителĕ. Вĕсем хăйсен никама пăхăнман ирĕк шухăшĕсĕн кĕрешеççĕ. Вăл ăслăлăх патне туртăнакан хăй вăхăтĕнчи чун-чĕрелле çамрăксене салам лать. Чацкий, унăн авторĕ Грибоедов пекех, поэт тата мыслитель, писатель тата оратор, ун чухнехи декабристсен интеллигенцийĕн чи лайăх представителĕ. Гончаров кун пирки питĕ вырăнлă каланă: Чацкий сăнĕ Белинскипе Герцен характерĕсене малтанах палăртса панă. Вăл трибун тата паттăр.

Полонский поэт та питĕ лайăх каланă: Грибоедовăн икĕ иннек, тенĕ вăл: ăçран килнĕ иннек тата юратуран тухнă иннек. Чацкий Софйăна юратнине кăтартнинче Грибоедов хăйĕн лирикăллă пысăк талантне палăртать.

Унăн геройĕн чĕререн тухакан ăшă сăмахĕсем юрату поэзийĕн чи лайăх вырăнĕсем пулса тăраççĕ. Чацкий юратăвĕ пысăк темăна çутатса пани, хăй юратакан хĕрĕн ăс-пуçне çав тери çуттăн тата тасач сăнласа пани пулать. Чацкий юратăвĕ çав тери тарăн пулнине, психологи енчен тĕрĕс пулнине Пушкин та кăтартса хăварнă: «Çав тĕлĕнмелле лайăх комедири пĕр япала палла—Софья Молчалина юратнине Чацкий ĕненменни. Епле илемлĕ, епле тĕрĕс-ха вăл!» Чацкин телейсĕр юратăвĕ кăткăс фабулăн вĕçĕ патне илсе пырать те ĕнтĕ. Çакăн пирки герой, хăйĕн юлашки сăмахĕсене каласа, пĕр пĕччен тăрса юлнă тата никама парăнман мыслитель çине тапăнма пĕрлешнĕ кивĕ обществăна питлет.

Çаксем ĕнтĕ вĕсем Грибоедов комедине çав тери тарăнлатма пулăшнă.

Комедири пит çивĕччĕн каланă вырăнсене автор якатма хăтланса пăхнă пулин те, хăй пурăннă вăхăтра ăна пичетлеймен. Апла пулин те комеди анлăн саралнă. Халăх хушшинче алçыру вуншар пин экземпляр сÿренĕ. Грибоедов вилсен тин, 1833 çулта, нумай вырăнсене цензура кăларса пăрахнă хыççăн комедие пичетлесе кăларнă. 1895 çулта, комеди пĕтĕмĕшпех пичетленсе тухнă тĕле, чи хаяр та çивĕч йĕркисем унăн халăх чĕлхине çирĕппĕн кĕрсе вырнаçнă пулнă.

Хĕвелтухăçнелле юлашки хут кайнă чухне темиçе кунлăха Грибоедов хăйĕн тусĕ—Бегичев патĕнче чарăннă пулнă. Бегичев унран: сĕнĕ комеди çырмастăн-и, тесе ыйтнине хирĕç Грибоедов çапла ответленĕ: «Çук, комеди урăх çыраймастăп, мĕншĕн тесен манăн хаваслăх çук. Хаваслăхсăр лайăх комеди çырма çук. Комеди мар, манăн çырнă трагеди пур». Вăл вара хăйĕн драми çинчен каласа панă, хăшпĕр вырăнсене вуласа та панă. Пьеса «Грузири каç» ятлă пулнă. Ăна Грузири халăх сăмахĕ тăрăх рифмăланă ирĕк сăвăпа сырнă. Вĕçлесе çитереймен сак драмăн сыпăкĕсене питĕ вăйлă тата хĕвелтухăçĕнчи трагикла хăйне уйрăм стильпе çырнă пулнă.

«1812 çул» ятлă драма та питĕ вăйлă пулмалла пулнă. Паллă Грибоедов хăй те Отечественнăй вăрçа хутшăннă. «Харсăр кавалерист» шутланнăскер, доброволецсен полкне кĕрсе, вăл виçĕ çул хушши çарта пурăннă. Хăйĕн сав драминче вăл французсем Российăна тапăнса кĕнине, Смоленскă илнине, Наполеон Кремльре Бородино сапăçăвĕ çинчен каласа панине, ополчени пухнине, французсем каялла тарнине анлăн сăрласа кăтартасшăн пулнă. 1812 çулхи событисене Грибоедов халăхăн çав тери пысăк историллĕ иккекĕ пек кăтартма шутланă. Анчах çак шухăш та пурнăçа кĕме пултараймана. Çавăн пекех эпир Грибоедов «Родамист тата Зенобия» ятлă трагедин планне тунине те пĕлетпĕр. Произведенире патша таврашĕнчи каварлашу çинчен, халăх сĕкленсе вĕсене пĕтĕмпех шăлса тăкни çинчен калакан шухăша сăнласа памалла пулнă. План çеç юлнă пулин те, Грибоедов-трагикăн хăвачĕ пит лайăх палăрса тăрать.

Государствăн пысăк ĕçĕнче тăрса тĕнчери анлă ыйтусемпе интересленни, паллă дипломата вилĕм патне илсе çитернĕ хĕвелтухăç ĕçĕсене активлăн хутшăнни — саксем вĕсем ăна литературăра ĕçлеме чăрмантарнă, пысăк шухăшсене пурнăçлама паман. Вырăс халăхĕн паттăрлăхне кăтартакан анлă произведенисем парассипе яланах тăрăшакан драматургпа поэтăн, историкпе ученăйăн творчествăлла ĕçĕ малалла епле саралса пымалла пулни çинчен унăн упранса юлнă татăкĕсем те лайăх каласа пăраççĕ. Анчах вĕçленсе çитнĕ унăн пĕртен-пĕр произведенийĕшĕн те халăх ăна ĕмĕрех юратса тав тăвать. Российăн Тегеранри посолĕ вăхăтсăр вилнĕ пирки пăшăрханни çинчен такăшĕ Пушкина калисан, поэт çапла ответленĕ: «Грибоедов хăйĕн ĕçне тунă, вăл «Горе от ума» çырса хăварнă», тенĕ.

Л. ГРОССМАН.

Финляндипе СССР хушшинче пынă суту-илÿ калаçăвĕсем пирки

Çак кунсенче Финляндипе СССР хушшинче СССР-ăн суту-илÿ органĕсем Финляндие апат-çимĕç тавраше парса, Финляндирен стратегиллĕ чĕртавар илес тĕлĕшпе калаçусем пуçлана.

Калаçусен плане тăрăх СССР Финляндие 30 000 тонна тĕштырă, 1.000 тонна сахăр, 300 тонна кондитерски япаласем ямалла. Çакăн вырăнне Финлянди СССР-а никель, кобальт, пăхăр, кÿкĕртлĕ колчедан памалла. Кунсăр пуçне, Финлянди хăйĕн верфĕсенче Совет Союзĕн хашпĕр тинес çар карапĕсене юсас тĕлĕшпе пулăшмалла. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла калана:

Арден савăлĕн çурçĕр флангĕнче союзниксен çарĕсем Биен тата Ларош хулисене йышăннă. Çак районран хĕвеланăçнерехре тăшман хирĕç тăрса кĕрешесси вăйлах пулман. Тăшман кунтан чакса пынă, союзниксен çарĕсем, вĕсене хăваласа пырса, Грюна йышăнса илнĕ тата Ларошпа Шамплон хушшинчи çула татнă.

Арден савăлĕн кăнтăр флангĕнче союзниксен çарĕсем Сент-Юбера пырса кĕнĕ. Кунтан хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем, çурçĕр еннелле наступлени туса пыракансскерсем, Тильерен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Сент-Юберпа Бастонь хушшинчи çула татнă. Бастоньран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Арланжран çурçĕртерехре тăшман хирĕç тăрса çапăçакан пĕр вырăна пĕтереççĕ. Çак районтан тухакан пĕртен-пĕр çула Донкольялĕ сывăхĕнче татса пăрахнă. Çак района кăнтăр енчен пырса çитнĕ союзниксен çарĕсем Таршана йышăнса илнĕ.

Люксембургпа Германи чиккинче, Валлендорфран сурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, тăшман пехоти Сюр (Зауэр) шывĕ урлă касма хăтланнине союзниксен артиллерийĕ сирсе пăрахнă.

Санталăк япăх пулнипе союзниксен авиацийĕ ĕнер малтанхи пекех çителĕклĕ вăйлă кĕрешеймен.

Саарбрюккенран кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем пăртак малалла кайнă. Тăшман вăйлă хирĕç тăрса çапăçайман. Савăлăн кăнтăр пайĕнче, Батш районĕнче, тăшман союзниксен çарĕсем хушшине кĕрсе каймалла хăтланни ăнăçсăр пулнă. Нимĕçсем Страсбургран çурçĕртерехри Рейн çинче наступлени тунă, союзниксене пăртак каялла чакарнă. Эльзас тÿременче, Страсбургран кăнтăртарахра, тăшманăн пĕр чаçĕ танксем пулăшнипе Обенхейм ялне йышăнса илнĕ.

Россфельдре тата Гербсхеймра (Эльзас) йывăр çапăçусем пынă.

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Италире 5-мĕшпе 8-мĕш армисен фрончĕсенче, санталăк лайăхланнă пирки, патрульсен ĕçĕсем вăйланнă.

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: фронтран килекен хыпарсем тăрăх, акăлчансен Монтгомери командир пулса ертсе пыракан çарĕсем тата кăнтăр енчен наступлени туса пыракан Паттон генерал çарĕсем Сент-Юбер хулинче (Бельги) пĕрлешнĕ. Кунта Арден савăлĕн кăнтăр-хĕвеланăç кĕтесси пулнă. Арден савăлĕн хĕвеланăç кĕтессине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă, анчах та Рейтер агентствин американецсен 8-мĕш армийĕнчи специальнăй корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Сент-Юбер хулинче халĕ те урамсенче çапăçаççĕ. Ларош хулипе Сент-Юбер хули хушшинчи çултан хĕвеланăçнелле нимĕç çарĕсем çук ĕнтĕ. Çапла вара, нимĕç çарĕсем союзниксен çарĕсем тăракан вырăна савалланса кĕрсе чи инçе кайнă пунктран 23 миля каялла чакнă. Монтгомери штабĕн представителĕ çапла каланă: союзниксем çав-çавах малалла куçса пыраççĕ. Арден савалĕ пĕчĕкленнĕçемĕн пĕчĕкленсе пырать.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, январĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Словенире, Подравина секторĕнче, Югослави чаçĕсем Вировитица районĕнчен Питомача хули патнелле чакакан нимĕç чаçĕсене хăваласа пыраççĕ. Тăшмана йывăр сухатусем кÿнĕ.

Хĕвелтухăç Боснире Маевица районĕн хĕвеланăç пайне тăшмантан тасатаççĕ.

ÇУРÇĔР ИТАЛИРИ ЗАБАСТОВКАСЕМПЕ ФАШИЗМА ХИРĔÇЛЕ ВЫСТУПЛЕНИСЕМ

РИМ, январĕн 9-мĕшĕ (ТАСС). Италин оккупациленĕ пайĕн тĕлĕшпе ĕçлекен министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Италире рабочисен фашизма хирĕçле массăллă выступленийĕсем пулса иртнĕ. Çав выступление Турин хули сывăхĕнчи Фиса заводĕнче пуçласа янă. Вăл выступлени фашистсемпе нимĕçсем çар продукцине туса кăларассине ÿстерме хăтланнине хирĕç пуçланнă. Саботажпа диверсие пула унта çар продукцийĕ туса кăларасси пĕтсе ларнăпа пĕрех пулнă. Миланри Мареллипе Капрони заводĕсенчи тата Бергамăри чылай заводсенчи рабочисем забастовка пуçласа янă. Вĕсем хыççăн Миланпа Туринри ытти предприятисенчи рабочисем те забастовка пуçласа янă.

ЛОНДОН, январĕн 9-мĕшĕ (ТАСС). «Таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Çурçĕр Италири заводсен оборудованине Германие илсе каймашкăн Больцано хулине пухаççĕ. Промышленность оборудованийĕсĕр пуçне нимĕçсем Германие вылăх-чĕрлĕх нумай ăсатаççĕ.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Миланра 10.000 сынна арестленĕ. Вĕсене пурне те Германие ăсатма хатĕрленеççĕ.

НОРВЕГИ ПАТРИОЧĔСЕН КĔРЕШĔВĔ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Швейцарин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: Ставангер сывăхĕнчи лагере хупнă Норвеги патриочĕсем нумаях пулмасть лагерь хуралне тапăннă та ăна хĕçпăшалсăрлатнă, хупса хунă сынсене пурне те ирĕке кăларнă. Патриотсем лагерь çурчĕсене вут тĕртсе хăварнă. Хăйсемпе пĕрле вĕсем лагерь хуралне те илсе кайнă. Хурал шутĕнче 5 офицер пулнă.

Стокгольмри радио пĕлтернĕ тăрăх, Норвеги патриочĕсем Осло хулинче нимĕç полицийĕн агентне Свартбекка вĕлернĕ. Вăл Норвеги патриочĕсем çинчен гестапона пĕлтерсе тăнă пулнă. Драммерна оккупантсен полицийĕ туса иртернĕ ухтару вăхăтĕнче патриотсем полици офицерне — Брюнильсена персе пăрахнă.

ДЕ ГОЛЛЬ ГЕНЕРАЛ ÇĔНĔРЕН ТУНĂ ДИВИЗИЕ ПĂХСА ТУХСА КĂТАРТУСЕМ ПАНĂ

ПАРИЖ, январĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 11-мĕшĕнче де Голль генерал Парижран инçе мар пĕр вырăнта нумаях пулмасть туса хунă çĕнĕ дивизие пăхса тухса кăтартусем панă. Франци çарĕ çапăçусене ытларах та ытларах хутшăнса пынипе хăй кăмăллă пулни çинчен пĕлтернĕ.

АМЕРИКА ÇАРНЕ МОБИЛИЗАЦИЛЕНИ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 10-мĕшĕ (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, çар министрĕн заместителĕ Паттерсон представительсен палатин çар комиссийĕнче çапла каланă: 1945 çулхи малтанхи ултă уйăх хушшинче Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсене тата 900 пин сын хутшăнать. Кунсăр пуçне, çар промышленноçĕ валли тата вăрçăпа хутшăнса тăракан халăх хуçалăхĕн ытти пайĕсем валли 700 пин сын кирлĕ пулать. Паттерсон кăтартса панă цифрăсем çар министерстви нумаях пулмасть кăтартнă цифрăсенчен икĕ хут пысăкрах. (Çар министерствин çав пĕлтерĕвĕнче çапла каланăччĕ: 1945 çулăн малтанхи уйăхĕсенче США-ри хĕçпăшаллă вăйсем кашни уйăхрах 60 пин сынна çити хутшăнса пымалла тенĕччĕ).

БОЛГАРИРИ ОТЕЧЕСТВЕННАЯ ФРОНТА КĔРЕКЕН ПОЛИТИКАЛЛА ТАВАТА ПАРТИ ТУНĂ ДЕКЛАРАЦИ

СОФИЯ, январĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 10-мĕшĕнче Отечественнăй фронта кĕрекен партисен представителĕсем пĕрлешÿллĕ ларура деклараци йышăннă. Вăл декларацире çапла каланă:

Отечественнăй фронт—политикăллă вăхăтлăх килĕшÿ мар. Вăл—халăхăн мĕнпур вăйĕсен нумай вăхăта пыракан боевой союзĕ пулса тăрать. Çав вăйсем фашистла режим хăварнă йывăрлăхсене пĕтерсе, ирĕклĕ çĕнĕ Болгари туса хурас тĕлĕшпе хăйсем çине çав тери пысăк задача илчĕç. Çак задачăна пурнăçлас тесен, Отечественнăй фронта малашне те сыхласа хăвармалла çеç мар, ăна тата ытларах çирĕплетмелле. Отечественнăй фронта кĕрекен политикăллă партисен Отечественнăй фронтăн программи тăрăх тата политикăллă 4 партин декларацийĕ тăрăх хăйсен пĕрлĕхне тата ытларах çирĕплетмелле.

Отечественнăй фронт умĕнче тăракан ответлă та паха задачăсене шута илсе, çав фронта кĕрекен политикăллă партисем вăл задачăсене пурнăçлас ĕçе хăйсен пĕтĕм вăйĕсене пама пулни çинчен пĕлтереççĕ.

Декларацире малалла çапла каланă: Отечественнăй фронта кĕрекен партисем Болгарири халăх çарне пур енчен те пулăшас тĕлĕшпе, халăх çарне мĕн кирлине пĕтĕмпех пама пултаракан çирĕп тыл туса хурас тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те тăвĕç.

Декларацире правительство программинче каланă экономика реформисене иртерме хăюллăрах тытăнма кирли çинчен каланă.

Декларацире çавăн пекех тата государство аппаратне фашистла сынсенчен тасатассине сывăхри вăхăтрах вĕçлесе çитерме кирлине кăтартса панă.

Тулашри политика тĕлĕшпе, — тенĕ декларацире,—Отечественнăй фронта кĕрекен политикăллă партисем аслă вырăс халăхĕпе ĕмĕр-ĕмĕр туслă пулма, çĕнĕ Югославири тăвантла халăхсемпе таччăн сыхăнса тăма, Англи, США, Франци тата ирĕклĕхе юратакан ытти халăхсемпе те туслă пурăнма тăрăшаççĕ.

Декларацире каланă тăрăх, Отечественнăй фронта кĕрекен политикăллă партисем хăйсен речĕсене фашистла сынсене кĕртес мар тесе, тата вĕсен ретне кĕрсе кайма ĕлкĕрнĕ фашистла сынсене унтан кăларса пăрахас тесе хытă тăрăшĕç.

Отечественнăй фронта кĕрекен политикăллă партисем,—тенĕ декларацире,—сентябрĕн 9-мĕшĕнче туса хунă правительствăна тата унăн 1944 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнче йышăннă декларацине ырласа хапăл тăваççĕ.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Рейтер агентствин Афины хулинчи специальнăй корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Скоби генералпа ЭЛАС пуçлăхĕсем хушшинче перемири çинчен калакан килĕшÿ çине алă пуснă.

Афины хулинче пичетлесе кăларнă официальнăй пĕлтерÿре çапла каланă:

«Январĕн 11-мĕшĕнче 22 сехет те 30 минутра Афины хулинче Грецири çĕр çинчи вăйсен командованийĕпе ЭЛАС центральнăй комитечĕ перемири тăвасси çинчен калакан килĕшÿ çине алă пуснă. Перемири килĕшĕвĕ çине пĕр енчен—Скоби генерал, тепĕр енчен—Джон Зевгос, Деметрий [illegible], Теодор Михайлидис тата Атенилис алă пуснă. ЭЛАС представителĕсем сĕннĕ тăрăх вăрçă ĕçĕсем январĕн 15-мĕшĕнче 00 сехет те 01 минутра чарăнмалла. ЭЛАС представителĕсем унччен кирлĕ распоряженисене пама ĕлкĕрмелле».

Перемири килĕшĕвĕ çине икĕ кун хушши калаçнă хыççăн алă пуснă.

КИТАЙРИ НАЦИПЕ ПОЛИТИКА СОВЕТНЕ СУЙЛАС УМĔН

ЧУНЦИН, январĕн 5-мĕшĕ (ТАСС). (Вăхăтра çитермен). «Гоминьгунбао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, январь уйăхĕн вĕçĕнче Китайри Наципе политика советне çĕнĕрен суйлаççĕ.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

Ÿкерчĕк çинче: Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуркассинчи промкомбинатри стахановкăсем. Малти вырăнта—валяльщица Елизавета Ефимова юлташ. Вăл нормăна 190 процент тултарать.

С. ФРИД фотоÿкерчĕкĕ.

КĂМПА, ÇЫРЛА, ПЫЛ ТАТА АВАС ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНАШĂН ПРЕМИЛЕНИ

ВЦСПС-па СССР Суту-илÿ Халăх Комиссарначĕ кăмпапа çырласем, пылпа ăвăс хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен предприятисемпе организацисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи ноябрь уйăхĕнчехи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура мала тухнă предприятисемпе организацисене премисем панă. Вĕсен шутĕнче Чăвашлеспродторгăн Çĕмĕрлери конторине (начальникĕ Чунаев юлташ) пĕрремĕш преми—5.000 тенкĕ, Йĕпреçри конторине (начальникĕ Андреев юлташ) иккĕмĕш преми—3.000 тенкĕ панă.

ВĂРÇĂ ИНВАЛИЧĔСЕНЕ ПУЛĂШНИ

Шупашкар районĕнче 1944 çулта инвалидсене пулăшас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Вĕсене 25 тонна тырă, 29.982 тенкĕ укçа парса пулăшнă. Çавăн пекех фронтовиксен çемьисене 94,5 тонна тырă тата тăлăх ачасене урана тăхăнмалли япаласем 2870 тенкĕлĕх парса пулăшнă.

«ВЫРĂС ПИСАТЕЛĔСЕМ—ЧĂВАШСЕМ ÇИНЧЕН»

Ф. Уярпа И. Мучи «Вырăс писателĕсем—чăвашсем çинчен» ятлă кĕнеке хатĕрлесçĕ. Ку кĕнекене иртнĕ ĕмĕрти вырăс писателĕсем—А. Пушкин, Л. Толстой, Ф. Достоевский, Радищев, Мамин-Сибиряк, Гарин—Михайловский, Телешов, совет тапхăрĕнчи писательсем — Вл. Маяковский, Д. Бедный тата ыттисем чăвашсем çинчен мĕн каланисене тата чăвашсем çинчен çырнă произведенисене пухса кĕртеççĕ.

Кĕнеке Чăваш АССР 25 çул тултарнă тĕле вырăсла пичетленсе тухмалла.

«АЧА-ПĂЧА САВВИСЕМ»

Çак кунсенче Чăвашгосиздат Чăваш халăх поэчĕн Н. И. Шелепин «Ача-пăча сăввисем» ятлă сăвă кĕнекине пичетлесе кăларать. Кĕнекене поэт тĕрлĕ вăхăтра ачасене валли çырнă, унта 30 сăвă кĕнĕ. Тиражĕ—4.000 экземпляр.

«СЕНКЕР ДВОЙКА»

Чăвашсен Академи театрĕ И. С. Максимов—Кошкинскин «Сенкер двойка» ятлă çĕнĕ пьесине выляса кăтартмашкăн хатĕрленме тытăннă. Чăвашгосиздат ăна уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларма палăртнă.

ЮРĂ КĔНЕКИСЕМ

Г. Хирбю тата Ф. Лукин композиторсем Чăвашгосиздата юрă кĕнекисем хатĕрлесе панă. Хирбю сборникĕнче—11 юрă, Лукинăн—6. Юрăсем нотăсемпе пĕрле пичетленсе тухаççĕ.

«ЮМАХСЕМ»

Вăтам çулхи ачасене валли Чăвашгосиздат вырăссен паллă писателĕ—сатирикĕ М. Салтыков—Щедрин çырнă «Юмахсем» ятлă кĕнекене кăларать. Кĕнекене «Шуйсăр ăслă ыраш-пăтри», «Пĕр хресчен икĕ генерала тăрантарса усрани», «Паттăр мулкач» тата ытти юмахсем кĕреççĕ. Ÿкерчĕкĕсем—Кукрыниксы художниксем тунăскерсем пулаççĕ.

ТРАХОМĂРАН СЫВАЛАÇÇĔ

ЕЛЧĔК. Вĕренÿ çулĕ пуçламĕшĕнче Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулта вĕренекен 112 ача трахомăпа чирленĕччĕ. Çак ачасене трахомăран сыватас тĕлĕшпе Х. Германова трахсестра тăрăшса ĕçлет. Вăл ачасене вăхăтра эмеллет тата тасалăх енчен асăрхаса тăрать. Тăрăшса ĕçленипе январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 36 ачана трахомăран сыватнă.

М. ЕГОРОВ.

Редакцие килнĕ çыру

Мана пулăшнăшăн тав тăватăп

Эпĕ Отечественнăй аслă вăрçă хирĕнче тăшмана хирĕç вăя шеллемесĕр çапăçрăм. Юлашкинчен аманса тăван Шупашкара таврăнмалла пулчĕ. Халĕ эпĕ вăрçă инвалидĕ. Анчах Совет влаçĕ инвалидсене тивĕçлипе пулăшать. Мана Шупашкар хула совечĕ пысăк пулăшу пачĕ. Эпĕ пурăнакан хваттерте çĕнĕрен кăмака турĕç, хутма вутă кÿрсе пачĕç. Çав пулăшу мана питĕ савăнтарчĕ. Инвалидсене çапла пулăшмалла тунăшăн эпĕ Совет влаçне чĕререн тав тăватăп.

Отечественнăй аслă вăрçă инвалидĕ, С. МОИСЕЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленине çакăн пек работниксем васкавлăн кирлĕ: главнăй бухгалтер, главнăй бухгалтер заместителĕ, старши диспетчер, машинистка, шофер тата киноаппаратурăна юсакан мастерсем. Главнăй бухгалтера апат-çимĕç литер йĕркипе параççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары. Кинотеатр, отдел кадров Управления кинофикации.

А. ГРИБОЕДОВ

Ăса пула иннек

(Сыпăк)

ЧАЦКИЙ

...Телейлĕ шанакан, ăна ăшă çак тĕнчере!
Ах! Турăçăм! Кунта-шим эп каллех!
Эп Мускавра! Эп сирĕн патăрта!
Анчах, епле сире паллас!
Аçта хай вăхăтсем? Аçта
Ачалăхăн таса кунçулĕ?
Ун чух эпир каç тăршшĕпе мĕнчухлĕ
Выляна сирĕнпе пытанкăле!
Унта, кунта, сĕтел-тенкел урлах
Чупатпăр, алхасаттăмăр пĕрле.
А аçăрпа мадам вылятчĕçĕ картла.
Эпир йăпшăннă тĕттĕм кĕтессе,
Çаках пулас кĕтесĕ те! Астăвăр-ха?
Сĕтел чĕриклетсен, е алăка
Хускатсанах—ÿкетпĕр шарт сиксе...

СОФЬЯ

Ача-пăча!

ЧАЦКИЙ

Çапла-с; а халь,
Вунçиччĕре, эсир илемлĕ чечек евĕр,
Ытарайми чипер, ăна хăвăр пĕлетĕр,
Çампа сăпайлă та, пăхмастăр çутталла.
Савни пур мар-и сирĕн? Каларччĕ мана,
Шухăшламасăр, ан именĕрсем.

СОФЬЯ

Кирек кама та именетĕрç ку
Васкавлă ыйтусем, тата тĕпчевлĕ куç...

ЧАЦКИЙ

Çырлах, вара сиртен тĕлĕнмесен,
Сире тĕлĕнмесен мĕнпе-ха кăмăл тулĕ?
Мĕскер кăтартĕ çĕннине Мускав мана?
Ĕнер бал пулнă, ыран иккĕ пулĕ.
Пĕри çураçнă хĕр: — ĕçĕ ăннă,
Тепри вĕçертнĕ мĕн. Йăлт çав сăмахсемех,
Альбомсенче те çав сăвăсемех.

СОФЬЯ

Мускав та юраймасть. Ак çын курсан тĕнче!
Аçта-ха лайăхрах?

ЧАЦКИЙ

Эпир çук çĕрсенче.
Ну аçăр мĕн халпа? Халь те Английски клубăн
Хисеплĕ членĕ-и? Мĕн авалтан, мĕн тупăк
Хуппи хупниччченех-и писмессе?
Мучейĕр ĕмĕрне иртерчи-ха сиксе?
А леш хайхи,
Вăл грек-и, тĕрĕк-и?
Леш хупхура, тăрна тунаăскер,
Пĕлместĕп эпĕ ун ятне?
Столовăя, гостинăя эс кĕр,
Аçта пуçна ан чик — вăл ĕлкĕрнĕ.
А бульварти йышран хай виççĕшĕ,
Пĕр аллă çул çамрăкланаскерсем?
Ратни-тавраш мĕльюн, хĕрĕсемпе вĕсем
Пур Европăпа хурăнташланĕçĕ.
А пирĕн çут хĕвел? Хай пирĕн мул вара?
Çамки çине çырнă: Театр, Маскарад;
Çуртне симĕспелен вăрман туса сăрланă.
Хăй самăрччĕ, артисĕсем ырхан ун.
Манман-и-ха? — Балра эпир пĕрре
Тупсаттăмăр секрет пĕр пÿлĕмре:
Сын шăпчăкла шăхăратчĕ ширма хыçĕнче.—
Çу кунĕн юрăçи хĕл варринче.
А леш, сире тăван, кĕнекене тăшман,
Чахуткăллă, хай вĕренÿ комитетне
Вырнаçнăскер? Ялан вăл кăшкăрса,
Тупа тума, причак çиме хушса:
Никам та ан вĕрентĕр те,
Ан пĕлтĕр те хутла, тесе,
Каллех çав сынсене курма тивет-çке ман!
Час йăлăхтарĕç те, камра варланчăк тупмăн?
Пăртак çулçÿресе киле таврăнсан
Тăван çĕр тĕтĕмĕ те—кăмăллă та тутлă.

П. ХУЗАНГАЙ куçарнă.

ФРОНТОВИКСЕН ÇЕМЬИСЕМШĔН ПĔТĔМ ХАЛĂХ ТĂРĂШНИ

Январĕн 8-мĕшĕнче РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн лару залĕнче çар сынвисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен канашлу уçăлнă.

Çĕршыва хÿтĕлекенсен çемьисене государство та, халăх та пысăк пулăшу параççĕ. Колхозниксем, рабочисем тата служащисем уйрăм фондсем тăваççĕ, ятарласа уйрăм гектарсем акаççĕ, воскресниксем, уйăхлăхсем организацилеççĕ, ĕç хыççăнхи вăхăтра ĕçлесе, вĕсем валли укçа тупаççĕ, апат-çимĕç хатĕрлеççĕ. Çапла майпа вара столовăйсем тата ача учрежденийĕсем тытаççĕ. Фронтовиксен çемьисене тумтир, атă-пушмак, апат-çимĕç парса пулăшаççĕ. Фронтовиксен çемьисене 565 пин пуç вылăх (вăл шутра 128 пин ĕнепе пăру) валеçсе панă.

Икĕ çул хушшинче гособеспеченин отделĕсем çар çыннисен çемьисене ĕç тупса парас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ çĕнĕ квалификаци тата хальхи ĕç тупнă. (ТАСС)

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора — 0—67, заместительне секретарен — 4—20, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00007 Типография № 1, Управления полиграфич[illegible] при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59Х42 ц. м. Тираж 16.000 экз.